чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

# ХЫПАР



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

239 /26394/№ | Ытлари кун, 2013, раштав (декабрь), 17 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru

## Олимп çулăмĕн эстафети – 33 çухрăма яхăн

***Раштавăн 16-мĕшĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин республика Правительствин членĕсемпе, федерацин влаç органĕсен территори управленийĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.***

Физкультурăпа спорт министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Сергей Шелтуков Шупашкар хулинче Олимп çулăмĕн эстафетине ирттересси çинчен пĕлтернĕ. Унта çулăма йăтакан 163 çын хутшăнать, вĕсенчен кашниех ăна 200 метра яхăн йăтса пырĕ. Чăваш Енре эстафета тăршшĕ – 33 километра яхăн.

Иван Моторин Шупашкарта пурăнакансене эстафета маршрутĕсем çинчен анлăн пĕлтермеллине каланă, мĕншĕн тесен вĕсем тăрăх харпăр хăйĕн тата общество транспорчĕпе çӳреме чараççĕ. Шупашкар хулан администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков пĕлтернĕ тăрăх – Олимп çулăмĕн эстафетине ирттерес ыйтусемпе пресс-конференци йĕркелеме палăртнă. Автотранспорт çӳремелли схемăсене, çавра çулсен схемисене массăллă информаци хатĕрĕсенче пĕлтерĕç.

ЧР финанс министрĕ Михаил Ноздряков пĕлтернĕ тăрăх – раштавăн 13-мĕшĕнче Хусан хулинче федерацин Атăлçи округĕн регионĕсен бюджет хушшинчи хутшăнăвĕсене тата пĕрлештернĕ бюджетсен шайлашăвне аталантарас ыйтусемпе канашлу иртнĕ, унта Раççей финанс министрĕ А.Силуанов хутшăннă.

Федерацин Атăлçи округĕн субъекчĕсен хушшинче Чăваш Ен çулталăк пуçламăшĕнчипе танлаштарсан патшалăх парăмне чакарнă 5 регион шутне кĕрет /Тутар Республики, Пермь крайĕ, Киров облаçĕ, Чул хула облаçĕ/. 2013 çулхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăн патшалăх парăмĕ 7531,6 млн тенкĕ пулнă. 2013 çул пуçламăшĕнчипе танлаштарсан ЧР патшалăх парăмĕ 2676,9 млн тенкĕ чакнă.

2011 çултан пуçласа, 2009-2010 çулсенчи тăхтав хыççăн, Чăваш Ен хăйĕн патшалăх облигацийĕсене фонд рынокĕнче вырнаçтарассине çĕнĕрен йĕркелесе янă. Хальхи вăхăтра рынокра 3500 млн тенкĕ /Чăваш Республикин патшалăхăн хаклă йышши хучĕсем/ çаврăнать.

ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова раштавăн 10-мĕшĕнче РФ Правительствин вице-премьерĕ Ольга Голодец ертсе пынă канашлăва хутшăннă. Унта Раççей Президенчĕн çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче йышăннă указĕсене мĕнле пурнăçланине сӳтсе явнă.

ЧР экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министрĕ Владимир Аврелькин раштавăн 13-мĕшĕнче Хусанта патшалăх продукцие сутăн илес тытăмра контракт мелĕпе ĕçлес енĕпе Регионсен хушшинче ирттернĕ конференцие хутшăннă. Конференци вăхăтĕнче патшалăх тата муниципалитет тытăмлăхĕн мĕн пур шайĕнче патшалăх продукцие сутăн илмелли сферăра ĕç-хĕле йĕркелемелли тĕп принципсемпе çĕнĕ правилăсене ăнлантарса панă.

■ **А.ВАСИЛЬЕВА**

*Канашлу*

# Парăм ӳсет, Çĕмĕрлесем çав-çавах васкамаççĕ

***Иртнĕ шăмат кун ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин Çĕмĕрле хулинче ĕçлĕ канашлу ирттерчĕ. Унăн ĕçне хула администрацийĕн ĕçченĕсем, хула Пухăвĕн депутачĕсемпе общественноç хутшăнчĕç.***



cap.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

Премьер-министр юлашки çулсенче Çĕмĕрлере пурăнмалли çурт-йĕр тытăмĕнче лару-тăру йывăрланнине палăртрĕ. «Республикăран паракан пулăшу самаях пысăк, халĕччен Чăваш Енри пĕр муниципалитета та ун чухлĕ укça-тенкĕпе тивĕçтермен. Халăхăн пăшăрханăвĕ ӳсни те сăлтавсăрах мар. Эппин, хулара çивĕч ыйту чылай. Министрсен Кабинечĕ пурăнмалли çурт-йĕр хуçалăхĕнче пухăннă пысăк парăма татма пĕрре кăна мар пулăшнă, кĕркуннехи хутса ăшăтмалли тапхăр пуçланичен кăна республика бюджетĕнчен 61 миллион тенкĕ уйăртăмăр. Газпа тата электроэнергипе тивĕçтерекен организацисен умĕнчи парăмсене чакарччăр терĕмĕр, анчах пурăнмалли çурт-йĕр тытăмĕнче лару-тăру çав-çавах улшăнмасть», – терĕ Иван Моторин.

Çĕмĕрле хулин 9 уйăхри экономикăпа социалла аталанăвĕн малтанхи пĕтĕмлетĕвĕсемпе хула пуçлăхĕ Сергей Яргунин паллаштарчĕ. Министрсен Кабинечĕн Председателĕ доклада итленĕ май хула япăх мар аталаннине, предприятисем ĕçленине тата пенси вăхăтра тӳленине палăртрĕ. Анчах пурнăмалли çурт-йĕр тытăмĕнчи парăм ӳснине, çул-йĕр тăвассипе тата каяшсене вăхăтра турттарассипе тĕллевлĕ ĕçлеменнине ăнланма йывăр терĕ. «Мĕншĕн хăвăр майсене шута илместĕр, республикăран уйăракан укça-тенкĕ виçине тĕпе хумастăр?» – терĕ Иван Борисович. Малалла вăл Çĕмĕрле монохула программăпа килĕшӳллĕн 2015 çулта патшалăх пулăшăвĕпе усă курма пултарасса шанăç пуррине палăртрĕ, анчах унччен федерацин çак программине кĕме тивĕçлĕ документсем хатĕрлессипе çине тăрса, тĕллевлĕ ĕçлемеллине, кашни кунхи ĕç планне тарăннăн тишкерсе палăртмаллине тата инвесторсене явăçтармаллине пĕлтерчĕ.

Йывăрлăхран тухмалли çул-йĕре палăртас тĕллевпе ЧР Строительство министерствин, Патшалăхăн пурăнмалли çурт-йĕр инспекцийĕн, Тариф службин представителĕсем хăйсен пĕтĕмлетĕвĕсене уçăмлатрĕç. Маларах шăпах çӳлте асăннă службăсем Çĕмĕрле хулинче пулса пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвне тишкернĕ.

Хулан çут çанталăк газĕпе тата электроэнергипе усă курнăшăн пухăннă парăмĕсем çинче «Газпром межрегионгаз Чебоксары» тата «Чувашская энергосбытовая компания» ертӳçисем уйрăммăн чарăнчĕç. Хулари котельнăйсене юлашки çулсенче кăна çĕнетнĕ пулин те газпа усă курасси палăрмаллах ӳснине тата урамри ăшă пăрăхĕсене хĕле кирлĕ пек хатĕрлеменни те тăкаксене пысăклатнине пĕлтерчĕç.

Шел те, парăмсем пирки Çĕмĕрлесем халĕ те татăклă пĕтĕмлетӳ тума васкаманни шухăшлаттарать. Республикăри чылай хула-районта нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансем кашниех хăйĕн хваттерне пайăррăн хутса ăшăтмалли майсемпе усă курать тĕк, кунта – пуçăнман та.

■ **Юлия МАРЕЕВА**

# Эфирта – "Тăван радио"

***Раштавăн 17-мĕшĕнче 100,3 FM хумсем çинче "Тăван радио" сăнав шайĕнче эфира тухать. Ăна Наци радиовĕн хыпарлав анлăшне пысăклатас тĕллевпе йĕркеленĕ. Унччен Наци радиовне республикăри районсем кăна итлеме пултарнă. Вăл Шупашкара тата Çĕнĕ Шупашкара çитеймен. Çак хуласенче вара Чăваш Енри халăхăн 47 проценчĕ пурăнать.***

2012 çулхи чӳк уйăхĕнче "Чăваш Ен" наци телерадиокомпанийĕ федераци конкурсĕнче çĕнтерсе 100,3 FM хумсем çине тухма ирĕк çĕнсе илнĕ. Çапла майпа ӳлĕмрен Чăваш Ен Наци радионе тата "Тăван радиона" республикăра пурăнакан кашни çын итлеме пултарĕ.

НТРК директорĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçлакан Юлия Стройкова каланă тăрăх – радиостанцие уçма нумай вăй хума тивнĕ. Малашне "Тăван радио" талăкĕпех эфира тухĕ. Вăл чăвашла тата вырăсла çĕнĕ хыпарсемпе паллаштарĕ, программăра общество-политика, ăс-хакăл, кану кăларăмĕсем пулĕç. Ăна чăвашла юрăкĕвĕпе "Тăван микс ир" /6-9 сехетсенче/ кăларăм уçĕ, "Тăван микс каç" хупĕ. 13-16 сехетсенче интервьюсем, студи хăнисемпе йĕркеленĕ калаçусем пулĕç. Çавăн пекех "Тăван радио" Наци радиовĕн чи лайăх кăларăмĕсемпе, радиоспектакльсемпе, классика тата хальхи юрă-кĕвĕ концерчĕсемпе паллаштарма хатĕрленет. Раштав уйăхĕн пуçламăшĕнче чăваш эстрадин çамрăк юрăçисен "Ротация" конкурсĕ вĕçленнĕ. Çĕнтерӳçĕсен юррисене эфира кăларма палăртнă. Çĕнĕ МИХ çĕнĕ ятсене уçас тĕлĕшпе уйрăмах хастар ĕçлĕ. Çавăн пекех 100,3 FM хума ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем илемлетĕç.

"Тăван радио" раштавăн 17-мĕшĕнче эфира тухни – хăйне евĕр паллă пулăм. Çак кун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Патшалăх Канашне янă Çырупа тухать. Ăна "Тăван радио", Наци радиовĕн тата Наци телекуравĕн тӳрĕ эфирĕнче итлеме пулать.

■ **И.СЕРГЕЕВА**

## ЧР Пуçлăхĕ Патшалăх Канашне Çырупа тухать

**Паян 12.00 сехетре Правительство Çурчĕн ларусем ирттермелли Пысăк залĕнче** Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Республикин Патшалăх Канашне çуллен яракан Çырăвĕпе паллаштарать.

Ларăва ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсене, Чăваш Енĕн ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисене, федерацин влаç органĕсен территори управленийĕсен тата муниципалитетсен, ял тăрăхĕсен ертӳçисене, йăлана кĕнĕ конфессисен пуçлăхĕсене, общество деятелĕсене, республикăри предприятисемпе организацисен, массăллă информаци хатĕрĕсен ертӳçисене чĕннĕ.

Черетлĕ Çырура Правительствăпа Патшалăх Канашĕн, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, предприятисемпе организацисен малашлăх ĕç-хĕлĕн çул-йĕрне палăртĕç.

Çырăва хатĕрленĕ чухне республикăра пурăнакансен, общество организацийĕсен, граждан обществин ытти институчĕн представителĕсен шухăш-кăмăлне шута илнĕ.

Республика Пуçлăхĕ Чăваш Ен Патшалăх Канашне янă Çырупа паллаштарнине Чăваш Республикин влаç органĕсен Порталĕнче, ЧР Наци телекуравĕн, ЧР Наци радиовĕн /105 FM/ тата «Тăван радио» /100,3 FM/ эфирĕсенче тӳрремĕнех трансляцилеççĕ.

## Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ вун çиччĕмĕш сессийĕ уçăласси çинчен

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн Чăваш Республикин Пуçлăхĕн М.В.Игнатьевăн Чăваш Республикин Патшалăх Канашне яракан Çырăвне итлеме пухакан черетлĕ вун çиччĕмĕш сессийĕ 2013 çулхи раштавăн 17-мĕшĕнче Шупашкар хулинче Правительство çурчĕн Ларусен пысăк залĕнче /Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 17 çурт/ уçăлать.

12 сехетре пуçланать.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсене тата чĕннĕ çынсене Правительство çурчĕн Ларусен пысăк залĕн фойинче раштавăн 17-мĕшĕнче 11 сехетрен регистрацилеççĕ.

Ыйтса пĕлмелли телефон: 64-21-65.

## Туризмăн чи лайăх объекчĕ

***Чул хулара туризм енĕпе «Атăлçие уç» фестиваль иртнĕ. Туристсен «Атăлçи» ассоциацийĕ пуçарнă мероприятие 14 регион хутшăннă.***

Унта Сĕнтĕрвăрринчи культурăпа туризм центрĕн ĕçченĕсем Н.Емельяновăпа С.Иванова хутшăннă, вĕсем районти туризм аталанăвĕпе паллаштарнă. Фестиваль вăхăтĕнче туризм объекчĕсен куравĕ, «Ăнăçлă проектсем: опыт тата практика» темăпа ассоциаци ларăвĕ тата туризм маршручĕсем йĕркелес енĕпе конференци иртнĕ. Çавăн пекех тĕрлĕ конкурсăн çĕнтерӳçисене чысланă тата федерацин Атăлçи округĕнчи туризмăн чи лайăх объекчĕсене палăртнă. Вĕсен йышне Сĕнтĕрвăрри те кĕнĕ, вăл «Федерацин Атăлçи округĕнчи туризмăн пĕчĕк хули» номинацире диплома тивĕçнĕ.

**А.МИХЕЕВ.**

## Шуршăл çинчен – çĕнĕлле

***Шуршăл ялĕ çинчен илтмен-пĕлмен çын пирĕн хушăра çук ах. Унăн мухтавлă ывăлĕ Андриян Николаев тĕнче уçлăхне хăпарсан вăл уйрăмах палăрчĕ. Шел, эпир ун çинчен çав тапхăртан кăна лайăх пĕлетпĕр.***

Унччченхи историйĕ мĕнле çыраннă, мĕншĕн «Шуршăл» ятлă (пачах та халĕ «Çутă çăл» тесе ăнлантарнă пек мар иккен)?.. Çаксем тата ытти тавра сăмах пуçараççĕ хальтерех «Çĕнĕ вăхăт» типографире икĕ пин экземплярпа пичетленсе тухнă «Знакомьтесь: Шоршелы» кĕнеке авторĕсем. Зоя Степановнăпа Владимир Антонович Антоновсем асăннă кăларăмра тĕрлĕ кăсăклă пулăм çинчен тĕплĕн каласа кăтартаççĕ.

Антоновсем ку тăрăхра çуралса ӳснĕ, нумай çул кунтах тăрăшнă. Зоя Степановна – Шуршăлти А.Николаев космонавтăн мемориал комплексĕн тĕп управçи, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Мăшăрĕ – Владимир Антонович – педагогика ветеранĕ, чăваш тавра пĕлӳçисен республикăри канашĕн президиумĕн членĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ.

**Ю.СТЕПАНОВ.**

## Пултарулăх конкурсĕ иртнĕ

***Вăрнар районĕнче хăй тĕллĕн вĕреннĕ авторсен «Виçĕ Çавал çаврисем» район фестивалĕ иртнĕ. Ăна кăçал пуçласа йĕркеленĕ. Конкурсра хăй тĕллĕн вĕреннĕ 24 композиторпа поэт «вăй виçнĕ». Маларах вĕсен хайлавĕсем район хаçатĕнче пичетленнĕ.***

Ялти талантсен хушшинче Вăрнар район администрацийĕ Ярмушкари ял тăрăхĕн специалистне Лиана Григорьевăна тĕслĕх вырăнне илсе кăтартнă. Вăл кăçал пуçласа сăвă çырма тытăннă. Упнер ял тăрăхĕн специалисчĕ Нина Тикинева вара хăйĕн сăввисене юрра хывать иккен. Вăрнар почтамчĕн пуçлăхĕн çумĕнче чылай çул ĕçленĕ Раиса Малышева та сăвă хайлать. «Хăй тĕллĕн вĕреннĕ поэт» номинацире Раиса Малышева пĕрремĕш вырăн йышăннă. Лиана Григорьевăпа Василий Семенов иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайланă. «Хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор» номинацире вара Олег Семенов мала тухнă. Александр Кузьминпа Василий Семенов та палăрнă. Хăйсем çырнă юрра шăрантаракансенчен малти виçĕ вырăна Татьяна Степанова, Альбина Максимова тата Виктор Волков пайланă.

**А.ГРОМОВА.**



ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# 2014: КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ

**Çакăн пек йышăну кăларнă Раççей Президенчĕ Владимир Путин кăçалхи ака уйăхĕн 22-мĕшĕнче. «Раççей Федерацийĕнче Культура çулталăкĕ ирттересси çинчен» указ культура аталанăвĕ тĕлĕшĕпе общество тимлĕхне ӳстерес, культурăпа истори еткерлĕхне, Раççей культура пĕлтерĕшне тĕнчере упраса хăварас тĕллевпе кун çути курнă.**

**Çак саманта культура ĕçченĕсем тахçанах кĕтеççĕ. Хăй вăхăтĕнче асăннă отрасль патшалăх шайĕпе пурнăçа кĕрекен «Вĕренӳ», «Сывлăх сыхлавĕ» тата ытти наци программи пекех тивĕçлĕ вырăн тупасса шаннăччĕ. Ун чухне ĕмĕтĕмĕр пурнăçа кĕреймерĕ. Çапах та, кая юлса та пулин, культура пирки аса илчĕçех.**

**Сăмахăма хамăр тăрăхпа, юратнă Чăваш Енпе, çыхăнтарамха. Республикăра çак тапхăрта культура тĕлĕшĕпе пĕр ĕç те пурнăçламан тени чăнлăхпа килĕшсе тăмасть. Ялта вырнаçнă вулавăшсене тĕслĕх шая çĕклени хăех питĕ пысăк пулăм. Çакăн хыççăн ялти культура учрежденийĕсене çĕнетме пуçларĕç. Ку енĕпе те савăнтаракан утăмсем тунă. Уйрăмах юлашки икĕ çулта. Культура çулталăкĕнчен тата пысăк хăвăртлăхпа сулмаклă ĕçсем кĕтетпĕр.**

**Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн 2012 çулхи утă уйăхĕн 28-мĕшĕнчи «Шупашкар хулине никĕсленĕренпе 550 çул тата Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитнине уявласси çинчен» указпа килĕшӳллĕн тĕрлĕ мероприятие хатĕрленме пуçланă ĕнтĕ. Вĕсен пысăк пайĕ культура объекчĕсене юсассипе тата реконструкцилессипе çыхăннă. 2020 çулччен хи тапхăрта 28 объекта çĕнетмелле. Вĕсен пысăк пайĕ Шупашкарăн тĕп урамĕсенче, хула халăхĕ тата унăн хăнисем пысăк йышпа пулакан лапамсенче вырнаçнă. Тĕпрен юсанин пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк. Юбилейпе çыхăннă мероприятисен пысăк пайĕ вĕсенче иртмелле. Унсăр пуçне Чăваш Еншĕн паллă пулăм шутланакан халăх пултарулăхĕн Пĕтĕм Раççейри «Раççей çăл куçĕсем», «Руç ăстисем» фестивалĕсем, Пĕтĕм тĕнчери кинофестиваль тата ытти те вĕсен никĕсĕ çинчех вăй илнĕ.**

**Акă Чăваш патшалăх оперăпа балет театрнех илер. Ăна хута янăранпа пĕрре те тĕпрен юсаман. Вăл вара тĕнче шайĕнчи çăлтăрсене те йышăнать. Çурта тем тесен те çĕнетмеллех. Вăл – республикăн сăнĕ. Çак сăмахсем Чăваш патшалăх филармонийĕ пирки те. Совет влаçĕн çулĕсенче политвĕренӳ çурчĕ пулнăскер кĕвĕ-çемĕ ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерет теме çук. Çурта, унти зала паянхи пурнăç ыйтнă пек йĕркелесе ярсан чăн-чăн çăлтăрсене чĕнме те намăс пулмĕ. Юсав ĕçĕсем пирки сăмах тапратнă чух çакна та палăртса хăвармалла: хальхи вăхăтра Чăваш Республики тата муниципалитет харпăрлăхĕсенче реставрацие исторolder культурăн 200 ытла палăкĕ кĕтет. Вĕсене юсама 488 млн тенкĕ кирлĕ. Культура çулталăкĕн витĕмĕпе лава вырăнтан тапратма май килĕ-ши?**

**Ку пурлăхпа, юсавпа çыхăннă самант тейĕпĕр. Унсăр пуçне отрасль ĕç-хĕлĕнче чылай пулăм тĕлĕшĕпе «пăр тапранасса» кĕтетпĕр. Хăшĕсем-ха вĕсем? Чи малтанах асăннă тытăмра ĕçлекенсем, уйрăмах муниципалитет шайĕнчисем, шалу ӳстерессе шанаççĕ. Яллă вырăнти культура ĕçченĕсен кăçалхи тăхăр уйăхри вăтам ĕç укçи – 9340 тенкĕ.**

**Ялти культура учрежденийĕсем пирки çакна каламалла: кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне тĕслĕх ята тивĕçнĕ клубсем 21 пулнă, çулталăк вĕçне тата 18 хушăнмалла. Культура çулталăкĕнче тата ытларах пуласса шанас килет.**

**Çитес çул тата хăш енĕпе ырă улшăнусем кĕтетпĕр-ха? Наци, Чăваш патшалăх ӳнер музейĕсен фончĕсенче реставраторсен ылтăн алли пирки темиçе çул ĕмĕтленекен картинăсен, авалхи япаласен черечĕ кăшт та пулин пĕчĕкленессе. Сăрăпа, йывăçпа ĕçлекен реставраторсем питĕ кирлĕ авалхи управçисене.**

**Тепĕр самант канăçсăрлантарать. Иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсен варринче Чăваш Енре «Чăвашкино» организаци ĕçлеме пуçланă. Кĕске вăхăтрах илемлĕ тата документлă темиçе фильм ӳкернĕ Иоаким Максимов-Кошкинский ертсе пыракан ушкăн. Шел, ырă пуçару нумая пырайман, «Чăвашкино» ĕçлеме чарăннă. Çапах та совет влаçĕн çулĕсенче хулапа ялсенче кино кăтартас ĕç питĕ йĕркеллĕ пурнăçланса пыратчĕ. Çак ĕçе асăннă ятпах çӳренĕ предприяти пурнăçлатчĕ. Ахăр саманан ахрăмĕ ăна та тĕп турĕ. Тавах турра, вăл хăйĕн фондне тирпейлĕн упраса хăварчĕ. Халĕ унта Мускав фончĕсенче çук кинокартинăсен копийĕсем те упранаççĕ-мĕн. Шупашкарта темиçемĕш çул ĕнтĕ сахал йышлă халăхсен Пĕтĕм тĕнчери кинофестивалĕ иртет. Унта çĕр-шыври тĕп киностудисемпе танах наци республикисенче ӳкернĕ ĕçсене те кăтартаççĕ. Тутарсем, якутсем, пушкăртсем, хантсем хăйсен фильмĕсемпе паллаштарчĕç. Эпир вара, уяв йĕркелӳçисем, шыв сыпнă пек тăратпăр. Тĕрĕссипе, аплах мар-ха. Ку енĕпе тĕп хулара хăй тĕллĕн ĕçлекенсем пур. Шăпах вĕсем пуçарулăх кăтартрĕç, кинофестивалĕн программа директорĕпе Сергей Лаврентьевпа тĕл пулчĕç, фестиваль программине вĕсем ӳкерекен ĕçсене те кĕртмешкĕн сĕнчĕç. Ыйту тухса тăрать: çак ĕçе мĕншĕн патшалăх шайĕнче тумалла мар? Ытти наци республикисен опытне шута илсе «Чăвашкино» патшалăх студийĕ йĕркелеме тахçанах вăхăт çитнĕ. Вырнаçма база пур, ку енĕпе ĕçлекен специалистсем йышлă. Штат тытса тăма укçа-тенкĕ тата пуçарулăх çеç кирлĕ. Асăннă ĕçе йĕркелесе янин пĕлтерĕшĕ пысăк. Республика, унăн çыннисем пирки документлă фильмсем, тăван халăхăн йĕлийĕркине тĕпе хурса тем тĕрлĕ картина, илемлĕ фильм ӳкерме пулать-çке. Çакă пĕтĕмпех хамăр валли, пуласлăхшăн.**

**Ĕмĕтсем вĕçĕ-хĕррисĕр. Вĕсенчен пĕчĕк пайĕ те пулин çитес çул пурнăçлансан Культура çулталăкĕ усăсăр иртмен тенĕ пулăттăмăр.**

■ **Надежда СМИРНОВА**





Паян пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил кăнтăртан çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 10 градус сивĕ, каçхине 1 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 753 мм, сывлăшри нӳрĕк 89 процент.

**Кун тăршшĕ 6 сехет те 57 минут.**

Ыран ăмăр çанталăк. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 8 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 1 градус ăшă, каçхине 1 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 744 мм, сывлăшри нӳрĕк 86 процент.

**Кун тăршшĕ 6 сехет те 56 минут.**

*Правительствăра*

# Бюджет 171 миллион тенкĕлĕх пысăкланать

***Министрсен Кабинечĕн Иван Моторин премьер ертсе пынипе иртнĕ ĕнерхи ларăвĕнче республикăн 2013 çулхи, планпа пăхнă 2014 тата 2015 çулсенчи бюджечĕ çинчен калакан саккуна улшăнусем кĕртессине ырларĕç. Çапла вара çитес çул бюджечĕ 170,9 млн тенкĕлĕх пысăкланмалла.***

Вице-премьер – финанс министрĕ Михаил Ноздряков пĕлтернĕ тăрăх – ял хуçалăхне пулăшмалли, çав шутра кредитсен процент виçисене субсидилемелли укçа виçи 128 млн тенке яхăн хушăнать. Çавăн пекех «Сокол» стадиона реконструкцилеме, Çĕнĕ Шупашкарти лаша спорчĕн комплексне, тĕп хулари маунтинбайк центрне тума хушма укçа пулать, онкологи диспансерĕн хирурги корпусĕ валли, амăшĕн капиталне тӳлеме яракан укçа виçине ӳстерме палăртнă.

Хăш-пĕр енĕпе уйăракан укçа виçи чакать: чи малтанах федераци бюджетĕнчен кăçал уйăрнă, усă курса ĕлкĕреймен укçана каялла тавăрса памалла – 256 млн ытла тенкĕ; виççĕмĕш е ун хыççăнхи ача çуралнă май паракан тӳлев валли 32,5 млн тенкĕ сахаллах уйăрĕç.

Çавăн пекех федераци бюджетĕнчен ачасен шкулччен вĕрентĕвĕн 11 объекчĕ валли пăхнă 96,5 млн тенке урăх объектсене тума ярĕç. Чăн та, пăшăрханма кирлĕ мар, çав 8 объект – шкулччен вĕрентӳ учрежденийĕсемех.

Пĕтĕмĕшле илсен бюджетăн тупăш пайĕ 35,6 млрд тенке яхăн пулĕ – 2012 çулхинчен 7% пысăкрах. Çав шутра хамăрăн тупăшсем 7,4% ӳснĕ, каялла тавăрса памалла мар килекен виçе вара – 6,5%. Бюджет тăкакĕсем 38,4 млрд тенкĕпе танлашĕç, çак виçе те иртнĕ çулхинчен 9% пысăкрах. Бюджет дефицичĕ маларах пăхнă шайрах юлать – 2,9 млрд тенке яхăн. Патшалăх парăмĕ 10,8 млрд тенке яхăн пулать, унăн хамăрăн тупăшсемпе шайлашуллă виçи 53,7% танлашĕ, ку – çулталăк пуçламăшĕнчи виçерен 1% пĕчĕкрех, çакна Михаил Геннадьевич ырă туртăм тесе хакларĕ. Сăмахне вĕçленĕ май вăл уйăрнă укçа-тенкĕпе юлнă вăхăтра туллин усă курма чĕнсе каларĕ.

Парламент спикерĕ Юрий Попов ял хуçалăх предприятийĕсем, хушма хуçалăха аталантаракансем илнĕ кредитсене субсидилеме патшалăх енчен укçа уйăрассипе çыхăннă çивĕч ыйтупа кăсăкланчĕ. Мускав уйăрмасть тĕк, тен, ЛПХшăн республика бюджетĕнчен тӳлесе татмалла? Вице-премьер – ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов пĕлтернĕ тăрăх – субсидипе çыхăннă парăмсене татма тата 240-250 млн тенкĕ çитмест. Çав шутра уйрăм çынсем хушма хуçалăха аталантарма илнĕ кредитшăн тӳлемелли парăм вăхăчĕ икĕ уйăх çурă таранах. Мускав йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн кăçалхи парăмсене çитес çул тӳлесе татĕç. Республика шучĕпе тӳлессине вара М.Ноздряков хирĕçлерĕ: пĕрремĕшĕнчен, апла тума юрамасть, иккĕмĕшĕнчен, хамăр тӳлерĕмĕр тĕк – федерацирен укçа ыйтмалли сăлтав та пулмасть. И.Моторин пăнчă лартрĕ: «Унта РФ Ял хуçалăх министерстви тата республика уйăракан укçа шайлашăвĕ 95х5 вĕт. Калăпăр, 30х70 пулнă тăк – хамăр çине илме пултараттăмăр. Капла вара... Ыйтăва Чăваш Ен Пуçлăхĕ хăй тĕрĕслесе тăрать, манăн шухăшăмпа, татса паратпăрах».

Обязательнăй медстрахованин территори фончĕн çитес çулхи бюджетне кăшт пĕчĕклетме йышăнни тавлаштармарĕ. Вице-премьер – сывлăх сыхлавĕн министрĕ Алла Самойлова пĕлтернĕ тăрăх – укçа виçи 10,5 млн тенкĕ чакать, çакă «Земство тухтăрĕ» программăна хутшăнакансенчен йышăннă заявкăсен шучĕ сахалланнипе сăлтавланнă. 74 заявкăна тивĕçтерме палăртнă, пĕтĕмпе вара 53 çынна çеç укçа панă. Шурă халатлисем ялта ĕçлесшĕн мар-им? Алла Владимировна хула йышши поселоксем çак программăна кĕменни ура хуни çинчен каларĕ. Сăмахран, çамрăксем Куславккана, Йĕпреçе, Вăрмара, çавнашкал ытти хăшпĕр поселока ĕçлеме кайсан программăпа килĕшӳллĕн укçа илеймеççĕ – вĕсем ялсем мар. Апла пулин те «земство тухтăрĕсен» шучĕ малашне иртнĕ çулсенчи пек йышлăн хушăнасси пирки вице-премьер хăй те иккĕленчĕ: пĕлтĕр, сăмахран, 132 врач программăпа килĕшӳллĕн укçа илнĕ, çитес çул çак йыш чылай пĕчĕкрех пуласси халех паллă.

ЧР патшалăх граждан служби çинчен калакан саккуна улшăнусем кĕртмелли проекта ырларĕç. Вице-премьер – ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов палăртнă улшăну пирки пайăррăн каласа хăварни вырăнлă: саккунра патшалăх служащийĕсен шалăвне çуллен индексацилеме йышăннине пăрахăçларĕç. Çапла вара 2015 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕччен вĕсен укçи пысăкланмĕ. Çакна Раççей саккунĕпе килĕшӳллĕн тунă. «Шанатăп, тӳсеетпĕр пуль...» – шӳтлерех пĕтĕмлетрĕ Правительство пуçлăхĕ.

■ **Николай ДМИТРИЕВ**

*Йĕплĕ карта леш енче*

# Вĕсем кунта курортра мар...

***Çук, ку хутĕнче тĕрме-колонире пулмарăмăр, анчах рубрики вулакан хăнăхма ĕлкĕрнĕскер те – вырăнлă пек туйăнчĕ. Тепĕр тесен сăмах шăпах йĕплĕ карта леш енчи ĕç-пуç çинчен вĕт – ĕç пирки.***

***Ĕлĕкрех ристансем тайгара вăрман касса нушаланнă, каналсем чавса хуçăлнă, йывăр ытти ĕçе пурнăçланă. Паян апла мар, анчах судпа айăпланнисем халĕ те ĕçлеме тивĕç. Ĕçлеççĕ те. Вĕсен ĕçĕн кăтартăвĕпе çак кунсенче Федерацин айăплава пурнăçлакан службин республикăри управленийĕнче йĕркеленĕ анлă куравра паллашма май пулчĕ – кунта Чăваш Енри тăхăр колонире туса кăларакан тĕрлĕ-тĕрлĕ продукци тĕслĕхĕсене пухнă.***

### Çын ĕçпе илемлĕ. Ристан та...

Ĕçлеме тивĕç терĕмĕр-ха та – пурте ĕçлесшĕн мар, пăлахая перекенсем те пур. Ку вара колонири режима сĕмсĕррĕн пăсни шутланать, çакăншăн пуçран шăлмаççĕ – канма килмен вĕт. Ĕçлемесср пултаракансем – 1-2-мĕш ушкăнсенчи инвалидсем, пенсионерсем. 3-мĕш ушкăн инваличĕсен – хăйсен кăмăлĕ. УФСИНăн ятарлă контингент ĕçлевне йĕркелекен уйрăмĕн пуçлăхĕ Евгений Шалимов пытармасть: çамрăксем уйрăмах ĕçлеме ӳркенеççĕ. Ирĕкре чух ниçта та ĕçлемен, пĕрпĕр специальноçа вĕренмен – кунта та кахалланаççĕ. Хăшĕсен ашшĕ-амăшĕ килкелесех тăрать, тутлă çимĕçсемпе тивĕçтерет те – «ма ĕçлес?» текенсем те çук мар.

Нумайăшне ĕçпе обязательнăй майпа тивĕçтермелле. Вĕсем преступлени туса кама та пулин тăкак кӳнĕ – сиене саплаштармалла. Алимент тӳлеменнипе кунта лекнисем те çук мар – вĕсен те шалăвăн пĕр пайĕ ачисене пăхма каять. Шалу тенĕрен, ĕçленĕшĕн кунта та укçа ирĕкри пекех илеççĕ. Виçи, паллах, питĕ пысăк теейĕмĕн, анчах саккунпа килĕшӳллĕн уйăхра тӳлемелли чи пĕчĕк виçене /5,2 пин тенкĕ ытла/ кунта та тивĕçтермелле. Çын ĕçе куллен тухсан, нормăна пурнăçласан ытларах та ĕçлесе илет. Хĕрарăмсем хайхи нормăна пурнăçлас енĕпе маттуртарах иккен. Арçынсен кăтартăвĕ пĕчĕкрех. Тĕрлĕ специальноçа вĕренмелли майсем те пур – Чăваш Енри колонисенче 3 профучилище ĕçлет: поварсене, каменщиксене, сварщиксене, çĕвĕççсене, ыттисене вĕрентсе хатĕрлеççĕ. Меллĕ – вăхăта ахаль ирттермесĕр ирĕке унти ĕç рынокĕнче кирлĕ специальноçпа тухма пулать. Чылайăшĕ çакăнпа усă курать: приговор вăхăтне ирттернĕ май 2-3 специальноç илме ĕлкĕрекенсем те пур-мĕн.



● *Йывăçран илемлĕ тĕрлĕ вак-тĕвек касса кăларасси ристансемшĕн яланах кăтартуллă пулнă.*

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен варринче колонисен умне йывăр лару-тăру тухса тăнăччĕ. Йĕплĕ карта леш енче республикăри пысăк предприятисен участокĕсем пулнă – ристансене ĕçпе тивĕçтернĕ. Самана улшăннă май çав улăпсен экономики такăнчĕ те – колонисенче те йывăрлăх тухса тăчĕ: çынсене ĕçлеттермелле – ĕç çук. Ку вара вĕсен шалăвĕпе кăна мар, дисциплинăпа та çыхăннă: ним тума аптăрасан ятарлă контингентран тем те кĕтме пулать.

### Ӳркенмен ăста пулнă

Телее, йывăр çав вăхăт хыçа юлнă ĕнтĕ. Халĕ юсанмалли учрежденисенче ĕç çителĕклĕ. Уйрăм çынсен бизнесĕшĕн те унта кĕме чару çук. Чылай енĕпе предпринимательсене унта ĕçлеме меллĕрех те: хăйсен саккасĕсемпе килмелле кăна – ыттине, мĕнле калас, колонисем хăйсем çине илеççĕ. Арендăлама лаптăксем пур, ĕç вăйĕ çителĕклĕ... Çийĕнчен çынсем ĕçе тухмасăр производствăна такăнтарас хăрушлăх çук: эрех ĕçмеççĕ, хурал çирĕп вĕт.

ФСИН управленийĕн ертӳçи Алексей Нецкин пĕлтернĕ тăрăх – паян республикăри колонисенчи ятарлă контингентăн 55% юсанмалли учрежденисен хăйсен производствисенче вăй хурать. Сăмах май, ку Раççейри вăтам кăтартуран чылай пысăкрах. Тепĕр пайĕ – хуçалăх енĕпе тивĕçтерекенсем. Колони хăй уйрăм пĕр патшалăх вĕт: кунта территори тирпейлекенсем те кирлĕ, пысăк йыша тăрантарма поварсем те... Кăçалхи 10 уйăхра айăпланнисен ĕç адаптацийĕн центрĕсем /вĕсем пĕтĕмпе 8/ 610 млн тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Услам – 35 млн ытла тенкĕлĕх. Эппин, кĕрĕк арки йăваласа лармаççĕ.

Колонисенче пулкаланă май унта тĕрлĕ продукци туса кăларнине пĕлеттĕм-ха. Анчах кунта пĕтĕмпех пĕр çĕре пухнă та – курмалăхтĕлĕнмелĕх пур. Лапсарти 1-мĕш колони, сăмахран, унччен металпа ытларах ĕçленĕ. Ку специализаци те юлнă-ха – шыв башнин макечĕ мăнаçлă курăнать, анчах юлашки вăхăтра унта та çĕвĕ енĕпе ытларах ĕçлеме пуçланă. Çапла, ĕнер тракториста, этемлĕхĕн вăйлă пайĕн шутланакан ытти ĕçре вăй хунă арçынсем тăрăшсах тĕрлĕ япала çĕлеççĕ. Тумтиртен пуçласа çар подразделенийĕсемшĕн меллĕ тем пысăкăш палаткăсем таранах.

Çĕвĕ ĕçĕ тенĕрен, вăл республикăри колонисемшĕн пушшех кăтартуллă. Çар, полици, ытти вăй тытăмĕ валли тĕрлĕ обмундировани çĕлеççĕ. Шупашкарти 4-мĕш колонире авă пушар хуралĕн ĕçченĕсем вут-çулăма сӳнтернĕ чух тăхăнакан тумтире те алла илнĕ. «Ак çакă, фольга пек йăлтăркка материалтан çĕлени, 200 градус вĕрие тӳсет, – ăнлантарать маншăн вăхăтлăха экскурсовод пулса тăнă Е.Шалимов. – 800 градуса тӳсекенни те пур.



● *Ку тумтирпе вут-çулăм та хăрушă мар.*

Материалне Германирен кӳреççĕ. Паллах, ку тумтир хаклă – комплекчĕ 24 пин тенкĕ тăрать».

### Мундиртан пуçласа автоприцеп таран

ФСИН тытăмĕнче ĕçлекенсене те тумтирпе тивĕçтереççĕ – кунти продукци пĕтĕм Раççейĕпе саланать. Кăштах мăнаçланчĕç те: «Пирĕн тумтирĕн пахалăхĕ пысăк. Пĕрре мар илтнĕ: ăна ăçта çĕленипе интересленеççĕ, Чăваш Енре мар тăк – илмеççĕ, Чăваш Енрен кӳрессе кĕтĕпĕр теççĕ». Ристансене хăйсене те тумтирпе тивĕçтереççĕ. Сăмах май, кĕçех вĕсен тумтирĕн форми улшăнать. Кунта çав çĕнĕлĕхе ĕçе кĕртме хатĕр ĕнтĕ. Айăпланнисем валли трикотаж джемперсем, калпаксемпе шарфсем çыхаççĕ. Симĕс тĕслисем – хĕрарăмсем валли, кăваккисене арçынсем тăхăнĕç. Куртăм та – ăна тăхăннă çын пирки ристан тесе калаймăн та. «Вĕсене капла колонири пурнăç килĕшсе каймĕ-и?» – текен ыйту ахальтен çуралмарĕ ĕнтĕ. Ăнсăртран мар анекдота çаврăннă пĕр тĕслĕхе аса илчĕç. Кинемей колонире ларакан ывăлĕ патне тĕл пулăва килнĕ. Унпа курнăçнă, пурнăçĕ пирки ыйтса пĕлнĕ хыççăн карчăк юсанмалли учреждени пуçлăхĕ патне кĕнĕ: «Аслă ывăл кунта аван вырнаçнă. Кĕçĕннине те йышăнаймастăр-и?»

Çĕнĕ Шупашкарти 6-мĕш колони продукцийĕн ассортименчĕ те анлă. Кунта урăх ниçта та туса кăларманни те пур. Вĕтĕ-вĕтĕ металл ункăсенчен перчеткесем çыхаççĕ. Ятарлă подразделенисен сотрудникĕсем валли меллĕ – хурах аллинчи çĕççе касакан вĕçĕнченех ярса тытсан та суранланмăн. Çак перчеткесене унччен аш-какай, пулă тирпейлекен промышленноç предприятийĕсем чылай туяннă. Шăмă ванчăкĕсем алла тиреççĕ – ахаль перчетке тăхăнсан аманасси часах. Ку вара, тимĕрскер, шанчăклă упрать. Пĕр перчеткере – вĕтĕ-вĕтĕ пин-пин ункă. Ăна çыхма кашни унка уйрăммăн шăратса-сыпса пымалла. Хăвăрт пулакан ĕç мар – хăрах перчетке çыхма та çыннăн пĕр эрне каять иккен. Çавăнпа хакĕ



● *Тĕрме-колони тавра спираль евĕр каракан йĕплĕ пралука та юсанмалли учрежденирех çыхаççĕ.*

те пур: 5 пӳрнелли – 2,4 пин тенкĕ, 3 пӳрнелли – 1,6 пин. Тĕрĕссипе, çак ункăсенченех тĕрлĕ япала çыхма пулать. Тĕслĕх вырăнне авă кольчуга та илсе килнĕ – пуçа тăхăнсан тăшман çĕççи-хĕççи хăрушă мар.

Кăткăсрах продукци те пур: автоприцепсем, трансформатор радиаторĕсем, телескоп трансформаторĕ, чул ватакан ротор – вĕсене Çĕрпӳри 9-мĕш колонире туса кăлараççĕ. Улатăр районĕнчи 8-мĕш колони-поселени вара ял хуçалăхĕпе туслă: выльăх усраççĕ, тыр-пул çитĕнтереççĕ. Сăмах май, районта ĕне усракан икĕ хуçалăх кăна-мĕн. Вĕсенчен пĕри – шăпах колони. Вăлах республикăри мĕн пур юсанмалли учреждение тĕрлĕ кĕрпепе, макаронпа тивĕçтерет. Тата – аш-какайпа, сĕтпе, пахча çимĕçпе. «Апла пулин те колони ял хуçалăх предприятийĕсен шутĕнче мар, – ӳпкелерех калаçрĕç учреждени администрацийĕн представителĕсем. – Çавна май ял хуçалăх предприятийĕсем усă куракан çăмăллăхсем те пире валли мар...»

Пĕтĕмпех асăнса та пĕтереймĕн: йывăç тирпейлеççĕ, тимĕрçĕ изделийĕсем хатĕрлеççĕ, тимĕр-бетон изделисем, композитлă арматура кăлараççĕ, пластмассăран тĕрлĕ япала тăваççĕ. Ĕçлет тĕрме-колони. Ĕçлемелле те. Саккунпа урлă пулнăскерсене унта курорта яман.

■ **Николай КОНОВАЛОВ.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем

*Çыхăну*

# Шупашкарта – çĕнĕ центр

***«Ростелеком» общество пĕтĕмĕшле Шупашкарта çĕнĕ çыхăну центрĕн пĕр пайне савăнăçлă лару-тăрура уçрĕ. Вăл тепĕр ултă уйăхран, юсав ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн, çав çуртрах хута кайĕ.***

Компани 10 çул каяллах рынока тухнă. Унăн Мускавпа Костромара та операторсем валли 655 вырăн пур. Çак кăтарту Чăваш Енри центра пула 1,5 хут ӳсет.

Уява ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин, экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов хутшăнчĕç.

– «Ростелеком» компани Раççей Федерацийĕн мĕн пур хулине тарăн тишкернĕ, аслă вĕренӳ заведенийĕ миçине, халăхăн пĕлӳ шайне тата пурнăç пахалăхне шута илнĕ хыççăн çак центра вырнаçтарма шăпах Шупашкара суйласа илнĕ, – терĕ Иван Моторин центр ертӳлĕхне ăшшăн тав тунă май.

Леонид Черкесов республика тĕп хулинче центр уçăлни Чăваш Еншĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ. Шупашкара çĕнĕ технологисем куçаççĕ, производство, инфратытăм малалла аталанать, культура çĕкленет, çамрăксем валли 700 ĕç вырăнĕ çĕнĕрен хушăнать.

– Центр пулăшăвĕпе ытларах Раççейри, çавăн пекех чикĕ леш енчи пысăк компанисем, банксемпе финанс организацийĕсем, ресторан сечĕсем, халăха куллен кирлĕ тавар туса кăларакансем анлă усă кураççĕ, – терĕ общество гендиректорĕ Андрей Петров. – Лайăх шалу, меллĕ ĕç йĕрки сĕннĕрен хатĕр вакансисене аслă шкул пĕтерекенсем, студентсем йышăнасса шанатпăр. Центр талăкĕпех тата кану кунĕсĕр ĕçленĕрен пирĕн услови вăтам ӳсĕмрисене те тивĕçтерет.

Оператора вырнаçма пысăк опыт та, ятарлă пĕлӳ те кирлĕ мар. Вырăс чĕлхине, компьютера лайăх пĕлни, сасăсене, сăмахсене пăсмасăр илемлĕ те уçăмлă калама, шухăша тĕрĕс йĕркелеме пултарни те çителĕклĕ.

Хăнăхсан ĕç йывăрах та мар. Шăнкăравсене, пулăшупа усă куракансен ыйтăвĕсемпе саккасĕсене тараватă йышăнмалла, абонентсене вăхăтра консультаци памалла. Хăшпĕр проектпа килĕшӳллĕн операторсен çĕр-шывăн кирек хăш регионĕпе те маркетинг тĕпчевĕсем, ыйтăмсем ирттермешкĕн çыхăнăва кĕмелле.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

# РФ Президенчĕ Владимир Путин Федераци Пухăвне янă Çырăва хакласçĕ

**Валентина АНДРЕЕВА, ЧР информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ:**



– Раççейре те, çĕр-шыв тулашĕнче те информаци тупăшулăхĕн хăвачĕ ӳссе пынине кашниех асăрхать ĕнтĕ. Конституцири пĕлтерĕшлĕ статьясенчен пĕринпе – шухăш тата сăмах ирĕклĕхĕ пирки – усă курнă чухне яваплăх пирки те манмалла мар. Владимир Путин Президент хăйĕн Çырăвĕнче туйăмсен яваплăхĕ – «Конституцин шăнăрĕ» – пирки каланă. Каланă кашни сăмахшăн, ĕçшĕн, сывлăхшăн, çĕр-шывшăн яваплăха туйни пĕлтерĕшлĕ.

Паллах, МИХсемпе пĕлтĕрхи пек тӳрĕ калаçу пулмарĕ. Анчах журналистсен, информаци хатĕрĕсен ĕçне хаклани Президентăн патшалăхăн пĕлтерĕшлĕ йышăнăвĕсене тата халăх тĕрĕслевне обществăра сӳтсе явма сĕннинче аван палăрать. «Манăн шухăшăмпа – мĕн пур саккун проектне, патшалăхăн пĕлтерĕшлĕ йышăнăвĕсене, стратеги планĕсене халăхăн, граждан обществин ытти институчĕсен вуламаллах, – палăртрĕ Президент. – МИХсем хастар, çынсемшĕн тата тĕрлĕ идейăшăн усă пулсан çеç обществăра пысăк кăтартуллă анлă дискуссисем, халăх вулавĕсем иртейĕç».

2013 çулхи Çыру – çирĕммĕш. Ăна хăш кун вуласçине те ăнсăртран палăртман. Раштавăн 12-мĕшĕнче Раççейре патшалăх уявĕ – Конституцин 20 çулхи юбилейĕ, пулчĕ.

**Сергей ПАВЛОВ, ЧР ял хуçалăх министрĕ:**



– Владимир Путин Çырура палăртнă ыйтусене Чăваш Ен аграрийĕсем те ырласа йышăнчĕç. Вăл хресчен ĕçне тивĕçлипе хаклани савăнтарчĕ. Тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн тав туни кăмăла çĕклерĕ.

Агропромышленноçра йывăрлăхсем пулсан та – малаллах талпăнатпăр. «АПК аталанăвĕ» наци проектĕнче, каярахпа агропрома 2008-2012 çулсенче аталантармалли патшалăх программинче лартнă тĕллевсем пурнăçланчĕç.

Хресчен пурнăçне лайăхлатасси, ялта кадрсем çирĕплетесси – маларах татса памалли ыйтусенчен пĕри. Ăна пурнăçлассишĕн республикăпа Раççей шайĕнче ĕç сарăлсах пырать. Федерацин «Ялăн социаллă аталанăвĕ» программине малалла тăсма «Яллă вырăнсене 2014-2020 çулсенче вăйлăн аталантарасси» программа йышăннă. Çавнашкал документа регион шайĕнче те çирĕплетнĕ. Ăна патшалăхăн агропрома аталантарас тĕлĕшпе йышăннă программин картинче пурнăçлăпăр. Министерство конкурса хутшăнма ку документа 8 регионпа пĕрле Раççей Ял хуçалăх министерствине чи малтан çитерчĕ.

Çĕр-шыв Президенчĕ Владимир Путин бюджет саккунне улшăну кĕртнĕ чухне ял инфратытăмне аталантарассипе çыхăннă ыйтусене татса памаллине палăртрĕ. Ку енĕпе ялта ырă ĕç чылай тусан пысăк ăсталăх пухнă специалистсене те производствăна явăçтарма май килĕ.

Çĕнĕ программăра çĕнĕ тĕллевсем лартнă. Сăмахран, ялсенче пурăнмалли çурт-йĕр çавăрма хыснаран укçа малтанхинчен чылай нумайрах уйăрĕç. Иртнĕ çулсенче ялти çемье социаллă программăпа килĕшӳллĕн пурăнмалли вырăн çавăрса тӳснĕ тăкакăн 45 процентне патшалăх саплаштарнă пулсан – çитес çултан 70 процентне субсидилеме тытăнĕç.

**Владимир ИВАНОВ, ЧР вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ:**



– Общество хăйĕн пуçарăвĕсене пурнăçа кĕртме тытăнсан тин вĕрентӳ тытăмне улшăну кĕртме май килĕ. Земство йăли-йĕркине чĕртсе тăратмалла. Земство шкулĕсен паха енĕсем мĕнре-ха? Вăхăтĕнче кашнин тавра граждан обществисем йĕркеленнĕ, вĕсем вĕрентӳри çивĕч ыйтусене татса пама пулăшнă. Владимир Путин, манăн шухăшпа, питĕ пĕлтерĕшлĕ çак тĕллеве – халăха шкул тавра пĕтĕçтерме вырăнти хăй тытăмлăха аталантарассине – малти вырăна хурать. Шăпах шкулта халăх шухăшĕ çирĕпленет, патшалăхăн пуласлăхĕ йĕркеленет. Çавăнпах авалхи йăла-йĕркене упраса çĕннисене пурнăçа кĕртме тăрăшмалла. Ашшĕ-амăшне шкулпа кăсăклантармалла, вĕрентекенсене çĕнĕлле ĕçлеме хистемелле. Шалăва ӳстернипе кăна хальхи вăхăтра вĕрентӳ тытăмĕнчен пысăк кăтартусем кĕтсе илеймĕпĕр. Ача – вĕренме, учитель вĕрентме ăнтăлсан, ашшĕ-амăшĕ вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе кăсăклансан çеç вĕрентӳ пахалăхне ӳстерме май килĕ. Çавăнпах вĕсен интересĕсене пирĕн пĕрешкел тума тăрăшмалла.

Раççей Президенчĕ хăйĕн Çырăвĕнче палăртакан тĕллевсем пирĕн ĕç-хĕлпе, малашнехи плансемпе тӳр килеççĕ.

**Вадим ЕФИМОВ, ЧР культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕ:**



– Владимир Путин Президент Çырура халăхсен хутшăнăвĕн ыйтăвĕсен çивĕчлĕхне палăртрĕ. Чăваш Республикинче 128 тĕрлĕ наци çынни пĕр çемьери пек туслă, килĕштерсе пурăнать. Ахальтен мар тăнăçлăх, лăпкăлăх, халăхсем пĕр-пĕрне хисеплени – обществăн тĕп пуянлăхĕ, пысăк çитĕнĕвĕ теççĕ. Çырура çавăн пекех килес çул халăха çутта кăларассипе, воспитани парассипе ытларах ĕçлемеллине каланă. Патшалăх политикине, çав шутра вĕрентĕве те, культура, истори, вырăс чĕлхи пирĕн нумай нациллĕ халăха пĕрлештерсе тăнине шута илсе йĕркелемеллине палăртнă.

Раççейре 180 тĕрлĕ халăх пурăнать, вĕсенчен 76 проценчĕ – вырăссем. Историе тишкерсен вырăс чĕлхи, культури малта тăни курăнать. Çапах та тутарсем, чăвашсем, пушкăртсем, ытти халăх Раççей культурине аталантарма пысăк тӳпе хываççĕ.

Культурăн çивĕч ыйтăвĕсене татса парас, истори еткерлĕхне упраса хăварас, Раççей культурин сумне тĕнче шайне çĕклес тĕллевпе В.Путин Президент 2014 çул çĕр-шывра Культура çулталăкĕ пулассине пĕлтерчĕ. Чăваш Республикинче те ăна анлăн паллă тума палăртнă. ЧР Культура министерстви влаç органĕсемпе тата общество организацийĕсемпе канашласа мероприятисен çулталăклăх планне туса хатĕрленĕ. Хальхи вăхăтра эмблемăн чи лайăх эскизне палăртма конкурс пырать. Ку тата ытти мероприяти халăхăн пултарулăхне аталантарма, çынсене культура ĕçне хастар хутшăнма хистессе, йăх-несĕлсен еткерĕпе тивĕçлипе усă курма пулăшасса шанатăп.

# Ĕç рынокĕн çаврăнăçулăхне ӳстересси – конкретлă тĕллев

Раççей Президенчĕ В.В.Путин Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвне янă Çырура çакна палăртнă: "Професси вĕренĕвне çĕнетсе улăштарнă май ĕç рынокне çаврăнăçуллăрах туса пырассине асра тытмалла. Кирлĕ тĕк граждансен тепĕр специальноçа хăнăхмашкăн, профессин çĕнĕ стартне илмешкĕн май пулмалла. Ĕçлемешкĕн тепĕр вырăна, урăх хулана, ытти региона куçма хатĕррисем валли те условисем туса памалла. Паллах, çакна территори аталанăвне шута илсе, бизнеса хутшăнтарса пурнăçламалла. Çынсене информаци хӳтлĕхĕпе тивĕçтермелле, хăш регионта юрăхлă ĕç тупма пултарасси пирки кашни çын пĕлсе-курса тăма пултартăр тесе вакансисен пĕтĕм федераци базине йĕркелесси пирки те асра тытмалла. Ку енĕпе йышăнусен пĕтĕмĕшле комплексĕ кирлĕ".

Çĕр-шыв Президенчĕ уçăмлатнă тĕллевсем Чăваш Ен Правительствин нормативлă правăн конкретлă акчĕсенче çывăх вăхăтрах вырăн тупĕç. Уйрăммăн илсен, Чăваш



Республикин 2012-2020 çулсем валли йышăннă патшалăхăн "Халăха ĕçлевпе тивĕçтерме пулăшасси" программин пĕлтерĕшĕ ӳсет. Раççейĕн, çавăн пекех Чăваш Енĕн ĕç рынокĕнчи лару-тăру хальхи вăхăтра тăнăçлă, çавна май ăна çаврăнăçуллă йĕркелемешкĕн вăхăт хăй хистет.

Палăртнă тĕллевсене пурнăçламаллах.

■ **Сергей ДИМИТРИЕВ,**
**Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертӳçи**




# Юбилейлă турнир ăсталăха ӳстерме хистет



*Чăваш Енре тимĕр вăййине юратакансемшĕн çулталăкри тĕп ăмăрту «Хыпар» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн иртекен йăлана кĕнĕ Пĕтĕм Раççейри турнир шутланать. Яваплă çак ăмăрту татăклă пĕтĕмлетӳ тума май парать, çĕнĕ ыйтусем кăларса тăратать.*



● *Помост çинче яшсем те, ветеран та.*

Ĕлĕкрех те, пирĕн саманара та кире пуканĕ е штанга йăтасси нихăçан та массăллă спорт енĕ шутланман. Пĕчĕк ача çуралнă хыççăн тепĕр çултанах утма, каярахпа чупма хăнăхать, шкула çӳреме пуçличчен вăл йĕлтĕрпе е конькипе ярăнма, шывра ишме тата гимнастикăн тĕрлĕ хăнăхтарăвне пурнăçлама пултарать. Паллах, çитĕнекен ăру физкультурăпа спорта юратса ӳсесси малтанхи вăхăтра ашшĕ-амăшĕнчен, каярахпа майĕпен ăсталăха ӳстерсе çитĕнӳсем тăвасси педагогсемпе тренерсенчен тата медицина ĕçченĕсенчен нумай килет.

Çур ĕмĕр каялла кĕçĕн çулхи шкул ачисен хушшинче тимĕр вăййипе кăсăкланакан пулман. Штанга е кире пуканĕ йăтасси – çуран утасси те, чупасси те мар. Йĕлтĕрпе ярăнма та пире учительсем пуçламăш классенче вĕреннĕ чухнех хăнăхтарнă. Пĕчĕк чемпионсем халь 12-15 çулсенчех спортăн çак ансат енĕсемпе районхулари ăмăртусенче вăй виçеççĕ.

Кире пуканĕ йăтасси вĕренӳ программисенче çук. Ачасем тимĕр вăййипе кăсăкланасси тĕрлĕ сăлтавран нумай килет: чи малтанах тĕрлĕ виçеллĕ снарядсем çителĕклĕ пулмалла, тренировкăсем ирттерме уçă та ирĕклĕ пӳлĕм е ятарлă зал кирлĕ. Спортра пысăк çитĕнӳ тума ĕмĕтленекен яшсемпе хĕрсен методикăпа психологие лайăх пĕлекен тренер-преподавательсем пулмалла. Шел те, республикăри чылай хулапа салара 30-40 çул каялла çавăн пек услови пулман. Çавăнпа та ĕлĕкрех ирттернĕ чемпионатсемпе ăмăртусене ытларах 18-20 çултан аслăрах çынсем кăна хутшăннă. Вĕсем те пĕр-пĕринпе вăй виçме чи малтан кил картишĕнче, урамра, клубри хĕсĕк вырăнта е ял çумĕнчи лапамсенче пуçланă. Елчĕк районĕнче, сăмахран, 70-мĕш çулсенче пĕр ялта та спортзал пулман. Тренировкăсене обществăлла тренерсем е ятарлă вăтам пĕлӳ илнĕ физкультура учителĕсем ертсе пынипе шкул коридорĕсенче е культура çурчĕсенче ирттернĕ.

1984-1986 çулсенче «Коммунизм ялавĕ» /1991 çултанпа «Хыпар»/ хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн ирттернĕ малтанхи виçĕ турнирта вун сакăр çултан кĕçĕнрех каччăсемпе çитĕннĕ арçынсен йышĕ 100 çынран ытла пулман. Раштавăн 7-8-мĕшĕсенче Кӳкеçре иртнĕ XXX Пĕтĕм Раççейри турнира çĕр-шыври сакăр регионти 2002 çулта çуралнă пĕчĕк спортсменран пуçласа 70-80 çулсенчи мăн асаттесем хутшăнчĕç. Хăш-пĕр ушкăнра 15-20 атлет таран вăй виçрĕç. Çакăн пек ырă тĕслĕх кăçалччен нихăçан та пулман.

Çивĕч кĕрешӳре пĕрремĕш теçеткери вырăнсене Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн, Елчĕк тата Шупашкар районĕсен, Улатăр хулин, Чул хула облаçĕнчи Шахунья хулин, Тутарстанри Сабы поселокĕн, Канаш хулин, Ульяновск облаçĕн, Вăрнар тата Етĕрне районĕсен командисем йышăнчĕç. Шел те, кăçал Шупашкар хулинчи Мускав районĕн, Хĕрлĕ Чутай тата Сĕнтĕрвăрри районĕсен командисем питĕ япăх ăмăртрĕç, вĕсем 23-25-мĕш вырăнсене анса ларчĕç. Эпир пĕлнĕ тăрăх Элĕк, Комсомольски, Муркаш, Вăрмар, Çĕмĕрле районĕсенче, Çĕнĕ Шупашкар тата Çĕмĕрле хулисенче тимĕр вăййипе кăсăкланакан çынсем, уйрăмах яшсемпе хĕрсем, сахал мар. Анчах та вĕсем, тĕпрен илсен, çав район-хула администрацийĕсен физкультурăпа спортшăн яваплă специалисчĕсен тата ДЮСШ ертӳçисен тимсĕрлĕхне пула юбилейлă турнира хутшăнма çитеймерĕç.

Мана, çур ĕмĕре яхăн йывăр атлетикăпа кăсăкланакан спорт ветеранне, тепĕр сăлтав та пăшăрхантарать: юлашки çулсенче çитĕннĕ пăхаттирсен ăсталăх майĕпен чакать. Кӳкеçре иртнĕ спорт уявĕнче вĕсенчен пĕри те республика рекордне çĕнетме пултараймарĕ. Шел те, Шупашкар спортсменĕсем Раççей, Европа тата тĕнче чемпионачĕсене хутшăнма пĕр путевка та çĕнсе илеймен. Ахăртнех çак тĕслĕх ĕлĕкрех республикăн тава тивĕçлĕ тренерĕн е физкультурăпа спортăн ытти сумлă ячĕсене илме ĕлкĕрнĕ специалистсем юлашки вăхăтра япăхрах ĕçлеме пуçланине çирĕплетет.

Маларах эпир тимĕр вăййине юратакан çамрăксен йышĕ çулленех ӳссе пынине палăртрăмăр. Кунта та çивĕч ыйтусем пур – вĕсен ăсталăхĕ ӳсмест. Пĕлтĕр Волгоградра иртнĕ «Раççей çамрăклăхĕ» ФСО чемпионатĕнче пирĕн республикăри 16-18 çулсенчи виçĕ атлет чемпион ятне çĕнсе илнĕччĕ. Кăçалхи чӳк уйăхĕнче иртнĕ çакăн пек ăмăртусенче пĕр чăваш атлечĕ те чемпион ятне тивĕçмен. XXX турнирта ăмăртнă кĕçĕн çулсенчи 69 яшран чăваш атлечĕсенчен Куславккари Дмитрий Константинов кăна пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Ытти чемпионсем – пурте Тутар Республикинчи Çӳлту районĕнчен. Çапла, юбилейлă турнир массăлăха кăна мар, спортри ăсталăха та ӳстерме хистет.

■ **Петр СИДОРОВ,**
**РФ физкультурăпа спорт отличникĕ**

# Иван Таратин – Ака туйĕ паттăрĕ

***Вăрмар районĕнчи Кавал ялĕнче кун çути курнă СССР спорт мастерне Иван Таратина 65 çула çитнĕ тесе никам та калаймĕ. Сарлака хул-çурăмлă, кĕрнеклĕ арçын хăйне каччă пекех вăр-вар тыткалать.***



Çамрăклах спортпа туслашнăскер ял ярмăрккинче иртекен спорт ăмăртăвĕсене хутшăнмасăр пĕрре те юлман. Турнирсенче тутарсем кăна çĕнтерни пачах та килĕшмен ăна. Парнесене пĕтĕмпех тутар паттăрĕсем илсе кайнипе кам кăмăллă пулĕ. Зеленодольск районĕнчи Павлин ялĕнчи Мансур Салахов виçĕ хутчен «Ленинский» совхоз чемпионĕ пулни те шухăшлаттарнă ăна. Вĕсене çĕнтерекен чăвашсем çуралман-шим çĕр çинче? Çак тĕллевпех вăл ирĕклĕ мелпе кĕрешме вĕренет.

«Пĕррехинче Вăрмарти спорт шкулĕн тренерĕ Ю.Ефремов кĕрешӳ секцине çӳрекен яшсене Кавала илсе килнĕччĕ. Вĕсем ял халăхне хăйсен ăсталăхĕпе паллаштарчĕç. Çакă çамрăксене кăмăла кайрĕ, вĕсен те кĕрешме вĕренес туртăм çуралчĕ. Çакăн хыççăн эпĕ те Вăрмара çӳреме пуçларăм. Секцире каччăсем йышлăччĕ. Республика турнирĕсенче призер пулни те сахал марччĕ», – аса илет малтанхи утăмĕсене Иван Петрович.

Каярах хăй те ăмăртусене хутшăнма пуçлать, çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвать. Салтакра та спортсмен ăсталăха туптать. Çар чаçĕн спартакиадинче ирĕклĕ мелпе кĕрешсе вăтам виçеллисен хушшинче чемпион ятне çĕнсе илет. Граната ывăтассипе те пĕрремĕш вырăн йышăнать. Салтакран çирĕпленсе таврăннă каччăна районта часах асăрхаççĕ, спорт шкулне ĕçлеме чĕнеççĕ. Çав тапхăрта «Урожай» спорт обществин спортсменĕсем ирĕклĕ мелпе кĕрешес енĕпе яланах малти вырăнсене йышăннă. Республика командин йышĕнче И.Таратинăн вĕренекенĕсем те пулнă.

Канашри педагогика училищин физвоспитани уйрăмĕнче вĕреннĕ чухне «Спартак» спорт обществи ирттернĕ тĕрлĕ тупăшăва пĕрре мар хутшăннă вăл. Йĕтре тĕртес, штанга çĕклес, кире пуканĕ йăтас енĕпе те хастарлăх кăтартнă. Çăмăл атлетсен хушшинче иртнĕ ăмăртура та темиçе хут палăрнă. Тĕслĕхрен, йывăр атлетика енĕпе республика рекордне çĕнетнисен йышĕнче Иван Таратинăн ячĕ те пур. Вăтам виçеллĕ спортсменсен хушшинче вăл икĕ енлĕ кĕрешӳре 217,5 килограмм çĕкленĕ.

Педучилищĕрен вĕренсе тухнă хыççăн пултаруллă çамрăка Кавалти вăтам шкула ĕçлеме яраççĕ.

Паянхи пекех лайăх ас тăватăп: «Восход» колхоз ĕçченĕсем çурхи уява анлăн паллă турĕç. Чемпион ячĕшĕн Иван Таратинпа Тутар Республикинчен килнĕ Мансур Салахов кĕрешрĕç. Çивĕч тупăшура пирĕн ентеш çĕнтерчĕ. Ялсенче тата район центрĕнче иртекен Ака туйсенче хăйĕн вăйне вăл пĕрре мар тĕрĕсленĕ. Паттăр ятне пурĕ 147 хут тивĕçнĕ, çав шутран 16-шне – районта.

1976 çулта Патăрьел районĕнчи Шăнкăртам ялĕнче ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсем вăй виçнĕ. «Финалта Патăрьел чемпионĕпе тупăшма тиврĕ. Çурăм çине икĕ хутчен çавăрса хутăм пулин те манăн çĕнтерĕве йышăнмарĕç. Виççĕмĕш хутĕнче кăна судья эпĕ çĕнтернĕ тесе пĕлтерчĕ», – аса илет Иван Петрович.

Пирĕн ентеш Раççей шайĕнчи ăмăртусене те тăтăшах хутшăннă, лайăх кăтартусемпе савăнтарнă. 1970 çулта республикăри профсоюзсен çуллахи IV спартакиадинче Кавал каччи пурне те парăнтарса чемпион ятне çĕнсе илнĕ. Классика тата ирĕклĕ мелпе кĕрешсе ултă хут республика чемпионĕ пулнă.

«Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята тивĕçнĕ.

Спорта чунтан парăннă ветеран физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе чылай ĕç пурнăçлать. Акă ирĕклĕ мелпе кĕрешес енĕпе пĕр тăван Таратинсен парнисене çĕнсе илессишĕн турнир ирттересси çирĕп йăлана кĕчĕ.

■ **Анатолий ХОВАНСКИЙ**

## *Ăмăртусен хроники*



### Бадминтон

Юрий Степановпа Павел Попов бадминтонçăсем тĕнче чемпионатĕнчен медальсемпе таврăннă. Ăмăрту Германири Дормунд хулинче иртнĕ. Пирĕн ентешсем мăшăрсен турнирĕнче «бронзăна» тивĕçнĕ. Григорий Сергеев тренер патĕнче ăсталăха туптакан спорт мастерĕсем Европа тата тĕнче чемпионачĕсенче темиçе хут та малти вырăнсене йышăннă.

### Ишесси

Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 9-мĕш спорт шкулĕнче вĕренекенсем 2001-2003 çулсенче çуралнă хĕрсемпе яшсен хушшинче Пермь хулинче иртнĕ ăмăртура пухмача 24 медальпе пуянлатнă. Çамрăк спортсменсем ирĕклĕ мелпе ишессинче тата хутăш эстафетăра палăрнă. Уйрăм стартсенче 10 çулти Арина Кошкина пьедесталăн чи çӳллĕ пусми çине тăватă хут хăпарнă, вăлах нумай енлĕ кĕрешӳре çĕнтернĕ. Чи пысăк наградăна çавăн пекех Елена Давыдовăпа Дарья Любченко /100 м/, Анастасия Григорьева /батерфляй/ тивĕçнĕ.

### Каратэ WKC

Сарă ту хулинчи «Кристалл» спорт центрĕнче Раççей кубокне çĕнсе илессишĕн пысăк ăмăрту иртнĕ. Ку хутĕнче турнирта 20 регионтан 850 спортсмен кĕрешнĕ. Чăваш Ен каратисчĕсем унта 15 ылтăн, 22 кĕмĕл тата 21 бронза медаль çĕнсе илнĕ. Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе пирĕн республика команди иккĕмĕш вырăн йышăннă.

### Кросс

Чăваш Енри чи пултаруллă кроссмен Александр Новиков Сербире иртнĕ Европа чемпионатĕнче кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ. Юниорсен ăмăртăвĕнче Раççейĕн пĕрлештернĕ команди /пирĕн ентеш тата тепĕр тăватă спортсмен/ иккĕмĕш вырăн йышăннă. Чăваш Ен атлечĕ уйрăм тупăшура дистанцие вун пĕрмĕш вĕçленĕ. Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕренекен каччăшăн /тренерĕ – Валентин Давалов/ ку пысăк çитĕнӳ: пĕлтĕр чемпионатра вăл 68-мĕш пулнă.

■ **Андрей ПЕТРОВ**

*Сочи-2014*

# Пĕтĕм ĕмĕт-шухăш Олимпиадăпа çыхăннă

***Иван Черезов биатлонистпа Тюмень облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕн парнисене çĕнсе илессишĕн иртекен ăмăртуччен тĕл пулса калаçрăм. Вăл «Çĕпĕр мерченĕсем» стадионта тренировка ирттеретчĕ. Ун умĕнче 20 яхăн йĕлтĕрччĕ.***



**– Пурте санăн-и?**

– Çапла. Кунта сахал-ха, килте татах пур. Кашни ăмăртăва темиçе мăшăр йĕлтĕр илсе çӳретĕп.

Йĕлтĕр суйланă хыççăн эпир апатланма кайрăмăр. Икĕ сехет тренировкăра тар тăкса ывăнатăн паллах. Чăннипе, спортсменсем те ахаль апатпах сăйланаççĕ. Калăпăр: риспа аш.

**– Тутлă-и?**

– Çиме пулать. Корейăра иртнĕ тĕнче чемпионатĕнче пирĕн командăн уйрăм повар пулнă, вăл пире тутлă çимĕçпе хăналатчĕ.

**– Суранланнине пула эсĕ пĕр тапхăр ăмăртусене хутшăнаймарăн. Ун чухне еплерех шухăш-кăмăлпа пурăнтăн?**

– Чи малтан, паллах, сывалма тĕллев лартрăм. Больницăра чухне чупма ĕмĕтленеттĕм. Спортран каясси пирки нихăçан та шухăшламан, хăвăртрах йĕлтĕр çине тăрас килетчĕ.

**– Иртнĕ сезон саншăн чи пĕлтерĕшли пулчĕ. Ăна мĕнле хаклатăн?**

– Хĕрӳ тапхăр пуçланиччен темиçе уйăх маларах операци турĕç, ураран тимĕр пластинăна кăларчĕç. Тухтăрсем чупма хушмастчĕç – итлемерĕм. Малтан йывăрччĕ, кайран хăнăхрăм. Халĕ кросс та чупатăп.

**– Кăçал эсĕ виçĕ ăмăртура тупăшрăн, вĕсенче сана çăмăл пулмарĕ. Кăтартусем пăшăрхантармарĕç-и?**

– Паллах, лайăххине кĕтетĕн. Тĕнче Кубокне хутшăнас килетчĕ. Хальхи вăхăтра эпĕ IBU Кубокĕнче ăмăртнăшăн та савăнатăп.

**– Тĕп команда йышне кĕме çăмăлах мар – çамрăксен хушшинче вăйли чылай.**

– Пĕр-пĕринпе тупăшни ырă пулăм – спортсменсен пултарулăхĕ ӳсет. Пурте медаль çĕнсе илесшĕн, çавăнпа ăмăртусене чи пултаруллисен хутшăнмалла.

**– Иртнĕ сезонра Александр Логинов палăрчĕ, сана кам тĕлĕнтерчĕ?**

– Икĕ пулăм пирки калас килет: пĕри – Мартен Фуркад хăвăртлăхĕ. Вăл хăйне питĕ ирĕклĕ туять. Тепри – спринт тата персьют ăмăртăвĕсенче Эмиль Свендсен çĕнтерни, вăлах эстафетăра икĕ ылтăн медаль çĕнсе илни кĕтменлĕх пулчĕ.

**– Сана Удмурт Республикипе мĕн çыхăнтарать?**

– Унччен эпĕ республикăн пĕрлештернĕ командинче пулнă, çавăнпа унта пурăнакансем паян та маншăн пăшăрханаççĕ. Тĕрĕссипе, Ижевскра манăн çемье пурăнать: мăшăрăмпа икĕ ывăлăм. Тюменьре хваттер пур пулин те вĕсем кунта килме васкамаççĕ, мĕншĕн тесен эпĕ яланах е ăмăртура, е тренировкăра.

**– Тюмень хули сана килĕшет-и?**

– Хулара малтан та час-час пулнă. Халĕ кунта тус та, паллакан та чылай. Пур пĕр унта çӳреме çăмăл мар – çухалса кайма пултаратăп. Хăш-пĕр районта пачах та пулман.

**– Кану вăхăчĕсене епле ирттеретĕн?**

– Хула тăрăх мотоциклпа çӳреме, сăрт çинче йĕлтĕрпе ярăнма кăмăллатăп.

**– Эсĕ 2014 çулхи Олимпиадăна хутшăнас тĕллевлĕ-и?**

– Паллах. Эпĕ те, ыттисем те. Олимпиада – уйрăм тапхăр. Пĕтĕм вăй-хал, ĕмĕт-шухăш Сочипе çыхăннă. Паянхи тĕллев – тĕп команда йышне кĕресси.

**– Эсĕ чи лайăх спортсменсен йышĕнче, 2009-2010 çулсенче тĕнче ăмăртăвĕсенче виççĕмĕш пулнă, тепĕр сезонра – пиллĕкмĕш.**

– Эпĕ 32-ре, çавăнпа çулсене кура çитĕнӳсемпе палăрма кая юлман. Манран аслăрах спортсменсем те ылтăн медаль çĕнсе илеççĕ. Пирĕн командăра çамрăк спортсмен нумай, эпĕ те вăй питти арçын.

■ **Екатерина СКВОРЦОВА калаçнă**

**Редакцирен:** *Иван Черезовăн ашшĕ-амăшĕ – Тюмень облаçĕнчи чăвашсем.*

# Майя Костина: «Тӳпере хама ирĕклĕ туятăп»

***Парашют спортĕнче пысăк çитĕнӳсем тунă спортсменкăна кам пĕлмест пулĕ. СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ 6 хутчен РСФСР чемпионки пулнă, тĕнче чемпионатĕнче пилĕк хут çĕнтернĕ. Вăлах Совет Союзĕн рекордне 38 хут çĕнетнĕ, парашютпа 7000 /!/ хут сикнĕ. Нумаях пулмасть унпа тĕл пулса калаçрăм.***



## *Хăюллă хĕр ача*

«Канаш районĕнчи Шăхасанта 1942 çулта çуралнă эпĕ, ачалăхăм вара Атăл хĕрринчи Сосновка поселокĕнче иртрĕ, – калаçăва пуçларĕ Майя Петровна. – Атте, Петр Алексеевич, офицер пулнă. Вăрçă хыççăн пекарня тата столовăй ертӳçинче ĕçленĕ. Лăпкă та ырă кăмăллă çынччĕ, поэзие юрататчĕ, анчах фронтран хаярланса таврăнчĕ – çемçе чунлисене йывăрлăха чăтма питĕ йывăр çав – çавăнпа эпир унран хăракалаттăмăрччĕ. Анне, Екатерина Афанасьевна, сутуçăра вăй хунă. Çемьере темиçе ача та çуралнă, анчах иккĕшне кăна пурăнма пӳрнĕ. Кĕçĕн шăллăма Петьăна лайăх ас тăватăп. Ăна сăпкара сиктереттĕм, юрласа çывăрттараттăм. Шел, вăл та чирлесе вилчĕ».

Майя Костинăн аппăшĕ спортсменка пулнă иккен. «Рита манран пилĕк çул аслăччĕ. Вăл нумай çул пир-авăр комбинатĕнче ĕçлерĕ, çирĕп кăмăллă пулнипех çемье çавăраймарĕ. Спортпа питĕ туслăччĕ: сăнă ывăтас, йĕтре тĕртес енĕпе çитĕнӳсем тунă. Штанга йăтасси те уншăн йывăр марччĕ. Эпĕ вара çамрăк чухне чупма кăмăллаттăм, йĕлтĕрпе темиçе çухрăма парăнтарасси те чăлт сурасси кăначчĕ. Çавăнпах чылай ăмăртăва хутшăнаттăм, пĕрре мар çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçнĕ. Çапах та ун чухне ытти хĕр ача пекех артистка пулма ĕмĕтленеттĕм: юлташсемпе тăвансен умĕнче ташлаттăм-юрлаттăм, сцена çине тухма та вăтанман. Мандолина, купăс калама та вĕреннĕ. Çав вăхăтрах акробатика кружокне çӳреттĕм».

Анчах ашшĕ ачине çак шухăшран пăрнă, çăмăлттайсен ĕçĕ тенĕ вăл хĕрĕн шухăшне пĕлсен. Майăна вара хăйне евĕрлĕ профессисем килĕшнĕ, заводра е фабрикăра ĕçлекен пулас килмен унăн. Хăюллăскер нимрен те хăраман: йывăç çине йăпăр-япăр хăпарнă, тĕттĕм каçсенче те шикленмен. «Халĕ те çĕрле киле таврăнма хăрамастăп, урамра çулăхакан ĕçкĕçсемпе те пĕр чĕлхе тупма пултаратăп, анчах... Психика енĕпе аташнисенчен тата наркомансенчен турă сиртĕр», – çӳçенсе илчĕ спортсменка.

Харсăр пулнипех 17-ри хĕр çӳллĕ кран çинче машинистра ĕçлеме килĕшнĕ – укçа-тенкĕ нушиех илсе çитернĕ ăна унта. Чăлхапа трикотаж фабрикине, аэропорта, «Ача-пăча тĕнчи» лавккана, пир-авăр комбинатне, пурăнмалли хăш-пĕр çурта хăпартнă çĕрте вăй хунă вăл.

## *Самолет е парашют?*

Çамрăк хĕрĕн пурнăçĕнче çакнашкал ыйту та пулнă. Мĕншĕн? Пĕтĕмпех йĕркипе. Тĕп героя сăмах парар-ха. «Саккăрмĕш класра вĕреннĕ чухне шкула аэроклубри парашют спорчĕн кружокне çӳрекен яшсем килчĕç те пире хăйсем патне чĕнчĕç – чылайăшĕ çырăнчĕ, эпĕ те, летчик пулас ĕмĕтпе çунатланнăскер, тӳрех килĕшрĕм», – иртнине аса илет Майя Петровна. Анчах парашютпа икĕ çултан кăна сикме тивнĕ унăн. Хăйĕн пурнăçĕнчи чи пĕлтерĕшлĕ самантa паянхи кун та питĕ лайăх ас тăвать спортсменка: «1959 çулта пулчĕ ку. Малтан тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр, мĕн вĕреннине тепĕр хут аса илтĕмĕр. Як-12 самолетпа тӳпене хăпартăмăр, иллюминатортан çĕр çине тинкеретпĕр. «Аялалла ан пăхăр», – асăрхаттарать инструктор, çапах пĕрре те хумханман. Пĕрремĕш хут... Çав тери çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм. Тӳпере хăвна вĕçен кайăк пекех туятăн».

Çак кунранпа парашютпа миçе хут сикмен пулĕ вăл. Летчик пулас ĕмĕт çултан çул çирĕпленсе пынă. Пултаруллăскере ăннă: ăна Саранскри вĕçев шкулне вĕренме янă. Мĕнле савăнăç! Унта Майя Костина ăмăртусене хутшăнма пуçлать. 1963 çулта пĕрремĕш медаль çĕнсе илет: Украинăра иртнĕ Пĕтĕм Союзри турнирта хĕр акробатика енĕпе виççĕмĕш вырăн йышăнать. Тепĕр икĕ çултан СССР чемпионкин ятне тивĕçет, вăл – çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командинче. Пилот свидетельствине алла илнĕскер çав вăхăтра летчик пулас ĕмĕчĕ çинчен манса спортсменка çулне суйлать. «Самолета тытса пымалла, тӳпере вара хăвна ирĕклĕ тытатăн. Хамăн пурнăçăмра эпĕ Ан-2, Як-12 самолетсемпе тата планерпа вĕçнĕ, пурĕ 300 ытла сехет», – терĕ Майя Петровна.

Спортри çитĕнĕвĕсем унăн пурнăçĕнче сахал мар пулнă. 1966 çулта тĕнче чемпионатĕнчен спортсменка 5 ылтăн, 2 кĕмĕл медальпе таврăннă. Çав çул çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командине никам та çитеймен, тĕнчери пур ăмăртура та палăрнă вĕсем. Ушкăнпа сикессипе тĕнчен 43 рекордне çĕнетнĕ пирĕн ентешсем ун чухне. Майя Костинăн та – çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ, рекорд хыççăн рекорд. Паян килĕнче упранакан медаль-кубоксем ăна иртнине аса илтереççĕ, кашни награда çинчен каламалли чылай. Миçе çĕр-шывра, миçе хулара пулса курман пулĕ: Югослави, Итали, Германи... Парижра Эйфель башнинче пулнă чухне вăл Юрий Гагаринпа паллашнă иккен.

Тренировкăсемпе ăмăртусем тахçанах хыçа юлнă пулин те Майя Петровна парашютпа сикес ĕмĕтпе çунатланать, сывă пурнăç йĕркине пăхăнаканскер хальхи вăхăтра та çамрăк чухнехи пекех хастар.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

**Кăларăма Андрей МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.**

